# КЛУБ ěçченне

*Ертсе пыракан тата ачасем чăваш халăх тумěсемпе. Залра плакатсем тата кăчкă тытнă матрешкăсен ӳкерчěкěсем. Сăрланă çăмартасемпе мăнкун, кулич лартнă сěтел.*

## МĂНКУН

**I ертӳçě:** Ырă кун пултăр, ачасем! Ырă кун пултăр, хăнасем! Эпир питě хавас сире курма. Сывлăх, телей, ăнăçу тата тăнăçлăх сунатпăр. Паянхи уяв та савăнăçлă иртессе шанатпăр. Мěншěн тесен ăна пирěн чи юратнă, кěтнě Мăнкуна халалланă.

**II ертӳçě:** Мăнкун уявěн йăли-йěркисем питě нумай. Ватăсем ирпе тăрсан çӳç туранă чух, мěн чухлě çӳç – çавăн чухлě мăнук пултăр тенě. Вăрансанах ылтăн-кěмěл савăтран çăвăнма тăрăшнă, çитес çул пуян пултăр тесе. Çамрăк хěрсемпе каччăсем хěвел «вылянине» курас тесе пӳрт тăррине хăпарнă. Ачасем хěвел валли чěнӳ-йыхрав сăввисене вуланă.

**I ача:** Хěвел, пăх, хěвел, пăх,
Ачу шыва кайнă тет.
Турчăкапа туртса ил,
Тетте кěпе тăхăнтар,
Пылпа кулач сěрсе пар.

**2 ача:** Хěвел, хěвел, хěвел, тух,
Хěветěре курма тух!
Хěветěре пулмасан
Хěвеклене курма тух!

**Пěрле:** Хěвел, тух, хěвел, тух!
Çупа çăкăр çитереп.

**I ертӳçě:** Çак кун янракан чан сасси те хăйěн илемěпе таврана тыткăнлать. *(Магнитофонпа çырнă чан сассине итлеççě.)* Мăнкунра ыр хыпара пěлтерсе янракан чан сасси тěлěнмелле хаваслă.

**II ертӳçě:** Мăнкунра юрлакан чиркӳ юррине итлер-ха. Православи чиркěвěнче музыка инструменчěсем çук, Турра мухтаса çынсен ушкăнě, хор юрлать. Тимлěн итлер-ха, чи илемлě, чи тěлěнмелле музыка инструменчě – çын сассине. *(Чиркӳ юррин фрагментне итлеççě.)*

**I ертӳçě:** Мăнкун эрнинчен çуркуннехи уявсем пуçланнă. Хěр ачасем пире халь карталанса «Йăлтăр-йăлтăр çăлтăрсем» ташша ташласа параççě.

*(Хěр ачасен ушкăнě кăчкă турачěсем тытса ташлать.)*

**II ертӳçě:** *(Кăчкă хуллине кăтартать.)* Çулçă кăлармасăрах чечеке ларакан кăчкă пире çут çанталăк часах хěвел, ăшă тата çěнě тыр-пул парнелессе систерет. Ěлěкренех çынсем кăчкă туратěнче асамлă вăй пур тесе шутланă. Çавăнпа та выльăхсене пěрремěш кун кěтěве çак асамлă туратсемпе хăваланă.

**I ертӳçě:** Пěчěк ачасене вара кăчкă турачěсемпе «Çак кăчкă мěнле ӳсет, эсě те çапла ӳс», «Сывлăхлă пул тесе çапатпăр» тесе «хěненě».

**II ертӳçě:** Çак çутă та хаваслă уява пурте питě кěтнě, хатěрленнě: ирех тăнă, пěветнě çăмартасемпе мăнкун кучченеçěсене пěçернě.

**I ертӳçě:** *(Ертсе пыракан мăнкун валли хатěрленě сěтел патне пырать.)* Ачасем, пăхăр-ха, мěн тери хитре те илěртӳллě паян пирěн уяв сěтелě! Мěн ěлěкрен килекен йăлапа эпир паянхи кунччен Мăнкуна чи пысăк уяв вырăнне хурса сěтел çине чи тутлине, чи кирлине – пěветнě çăмартасем, мăнкун, кулич, канфет-пěремěк хуратпăр. Мăнкуна эпир чи аслă, чи хаклă, чи паллă кун уявлатпăр. Мěншěн тесен çак кун Христос чěрěлнě. Çавăнпа та эпир пěр-пěрне «Христос чěрěлнě» тесе саламлатпăр. Пире хирěç вара «Чăн-чăнах чěрěлнě» тесе хуравлаççě.



**II ертӳçě:** Мěншěн пěветнě çăмарта çак уявра чи хакли? Мěншěн тесен Христос пире пурнăç панă, çăмарта вара пурнăç палли. Мăнкун кунě ирпе-ирех мěнле пуçланнине пире ачасем кăтартса парасшăн.

*(Ачасем сценка выляççě: сěтел çывăхěнче Унтри мучипе Анук аппа. Алăка шаккаççě.)*

**Унтри мучи:** Ачасем килнěç пулмалла. *(Хирěç тухса кěтсе илет.)* Кěрěр, кěрěр! *(Чи малтан хěр ача, унтан ыттисем кěреççě.)*

**Хěр ача:** Христос чěрěлнě!

**Унтри мучи:** Чăн-чăнах чěрěлнě! Ай, хěрěм, кěрех, кěр! Эсě чи малтан пирěн пӳрте кěтěн, халь ěнтě ěне тына пăруласа парě, сурăхě – путек. Ай, телей, ай, телей. Кил-ха, сана минтер çине лартам. *(Пукан çине минтер хурса хěр ачана лартать, çăмарта парать, кукăль çитерет.)* Çи-ха, çи! Чăххи-чěппи, хур-кăвакалě ăнса пултăр тетěп-çке.

**Ачасем:** *(кěреççě)* Христос чěрěлнě!

**Унтри мучи:** Чăн-чăнах чěрěлнě!

**Анук аппа:** Иртěр, иртěр, ачасем, ларăр. *(Ачасене сак çине лартать.)* Акă çăмарта илěр-ха, кукăльне те çийěр. *(Кашнине кучченеç парать.)*

**Ачасем:** Тавтапуç! Тавтапуç!

**1 ача:** Ман çăмарта çинче «ХЧ» тесе çырнă. Мěне пěлтерет-ши вăл?

**2 ача:** Эпě пěлетěп, «Христос чěрěлнě» тени пулать. Манăн акă хыр ӳкернě. Вăл сывлăха, нумай çул пурăнасса пěлтерет. Сирěн мěн лекнě?

**3 ача:** Манăн «çăлтăр», ку – çынлăха, тасалăха пěлтерет.

**4 ача:** Манăн «хěвел».

**Анук аппа:** Ачасем, хěвеле тыр-пул ăнса пултăр тесе ӳкереççě.

*(Тенкел çинчи кěçěнрех ачи шăп лармасть. Ăна тепри тěксе илет.)*

**4 ача:** Тӳрě, шăпăрт лар. Анук аппан чăххи пусма лармасть ак, ун чух эсě айăплă пулатăн.

**5 ача:** Шăп ларатăп-çке.

**4 ача:** Лармастăн çав.

**5 ача:** Юрě, юрě, шăп ларăп.

**3 ача:** Ачасем, нумай лартăмăр, атьăр, каяр.

Атьăр, атьăр! Леш касра чуччу тунăччě, савăнта ярăнма каяр.

**Ачасем:** Тавтапуç, Анук аппа! Тавтапуç, Унтри мучи!

*(Ачасем тухса каяççě. Сцена умне ертӳçěсем тухаççě.)*

**I ертӳçě:** Мăнкун питě хаваслă уяв. Вăл савăнăçлă ирттěр тесе çамрăксем, ачасем тěрлě вăйă вылянă, юрă юрланă, ташă ташланă.

**II ертӳçě:** Эпир те сирěнпе мăнкун вăййисене выляса илер-ха.

«АН ӲКЕР». *Вылякансем шăлпа тытнă кашăк çинчи çăмартана ӳкермесěр палăртнă çěре çитсе килмелле. Маларах çитекенни çěнтерет.*

«КАМĂН ÇИРĚПРЕХ?» *Икě вылякан пиçнě çăмартасене пěр-пěринпе лектереççě – камăн çирěпрех, çав çěнтерет.*

«ÇĂМАРТА КУСТАРМАЛЛА». *Вылякансем тăракан вырăнтан 3-4 метрта призсем хурса тухнă. Кустарса янă çăмарта хăш приза лекет – хуçи çавна илет.*

**I ертӳçě:** Ывăнтăмăр-ха кăштах
Халь канар-ха ак ларсах.
Тупмалли юмах ярар,
Пултаруллине тупар.

*(Ертӳçěсем сак çине лараççě те çăмарта çине çырнă тупмалли юмахсене вулаççě. Ачасем тупсăмěсене тупаççě).*

**II ертӳçě:** Пурте ăна юратаççě, куçран пăхма вăтанаççě. *(Хěвел)*

**I ертӳçě:** Шур пичкере икě тěслě сăра. *(Çăмарта)*

**II ертӳçě:** Çамки хура, чěлхи хěрлě. *(Кăмака)*

**I ертӳçě:** Патакпа хěртеççě, чулпа хěстереççě, кăварпа пěçереççě, çěçěпе ваклаççě, çавăнпа та мана пурте юратаççě. *(Çăкăр)*

**II ертӳçě:** Чěрěрен вилě çуралать, вилěрен чěрě çуралать. *(Çăмарта)*

**I ертӳçě:** Кăвак арча уçăлчě, ылтăн çăмха курăнчě. *(Хěвел)*

**II ертӳçě:** Пěр сунчăк айěнче тăват пичче ларать. *(Сěтел)*

**I ертӳçě:** Такмаксем юрласа савăнар-ха.

*(Ачасем такмаксем юрлаççě.)*

Хурăнлăхра шăпчăк юрлать,
Сасси каfive шыв тăрăх.
Сăрт хыçěнчен хěвел тухать,
Ăшши каять çěр тăрăх.
Анне мана чěппěм тет.
Атте ашкăнчăк эс тет.
Эп тăратăп аптраса,
Кам-ши эпě чăнласа?
Анне те пулать пěрре,
Атте те пулать пěрре, –
Аттепе анне пире
Пурăнма хушать пěрле.
Ěшпěлятлă кайăк пур,
Ěçлěх çинчен юрри пур:
Ěçле-ěçле-ěçле – çи,
Ěçлемесен ан та çи!..

**II ертӳçě:** Халě вара пурне те хамăрăн уяв ячěпе хатěрленě сěтел хушшине чěнетпěр. Килěр, ырă хăнасем, вырнаçăр, хăналанăр. Пире ыр сăмахпа асăнăр. Уяв ячě сире пурне те!

**Елена КОЖЕМАНОВА.**
Аксу районě,
Беловка ялě.